Мĕн хак тăрать çын пурнăçĕ?

Е çынлăха çухатас марччĕ...

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

Хăш-пĕр аптекăсенче мĕнне каламасăрах:

– Мана пĕрре, мана 15, тесенех антиспетин кĕленчисене тыттарнă чух вĕсене сутаканнисем, кӳрсе килекенсем çав шĕвеке мĕншĕн туяннине пĕлмеççĕ-им вара? Халь çеç асăннă инкексенче хăйсен "тӳпи" пуррине пĕлмеççĕ мар вĕсем, пĕлеççĕ. Анчах тупăш, укçа-тенкĕ тăвассине маларах хураççĕ.

Потребкоопераци системинче кăçалхи 10 уйăхра 93 пин декалитр алкоголь продукцине сутнă е ваккăн сутмалли таварçаврăнăшĕн 34 проценчĕ чухлĕ. Пĕтĕм тупăшăн 1□3 пайне магазинсем эрех сутса тăваççĕ. Ку тараннчен çакă лăплантаратчĕ. Хăть унти эрех пахалăхсăр мар. Юлашки вăхăтра вара магазинсен прилавкесем çине те пахалăхсăр эрех кĕме пуçларĕ. Çакă эрехпе наркăмăшланакансен йышĕ татах ӳсме пултарасси пирки калать. Тĕрĕслекен органсем суту-илӳ предприятийĕсенче ирттернĕ 9 тĕрĕслевре ку тĕлĕшпе саккуна пăснă тĕслĕхсемпе 9 акт тата 6 предписани çырнă.

Паян вара çитĕннисем çеç мар, ачасем те ĕçме пуçларĕç. Ярапайкасси шкулĕнчи 5 вĕренекене эрех ĕçнĕшĕн тытса чарнă. Камран ырă тĕслĕх илесха вĕсен, енчен те паян ашшĕ-амăшĕсем ачасемшĕн паракан пособие те ĕçсе яраççĕ пулсан? Ачи инвалид пулнăшăн патшалăх паракан пособипе магазина кайса эрех, кӳршĕрен сăмакун, аптекăра антиспетин туянать пулсан? Ярапайкасси ял тăрăхĕнче çеç-ши çакăн йышшисем?

Москакасси ял тăрăхĕнче те çителĕклех вĕсем. 3 ачине аслашшĕпе асламăшĕ патне хăварса (вĕсем ĕçмеççĕ пулсан татахчĕ), качча тухакан 5 ача амăш пеккисем ку ял тăрăхĕнче çеç-им?)

– Хăть те мĕн тăвăр унпа. Мана вăл кирлĕ мар? – текен сăмахсене ĕçмен хĕрарăм калаять-и? Çак шухăшпа çуратнă-ши 6 ачине Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи хĕрарăм?

Тĕлĕнме кирлех-ши çакăн хыççăн ачисем эрех черкки енне аллисене тăснинчен? Арçын ачасемпе хĕрачасем преступлени çулĕ çине тăнинчен? Магазинсенчех саккуна пăсса çул çитмен çамрăксене турттмалли (4 тĕслĕх тупса палăртнă), сăра (3 тĕслĕх) сутаççĕ пулсан. Хамăрăн ачасем, тăвансен ачисем мар-иç, теççĕ пулас. Плана ытларах тултармалла. Кӳршĕре пулăшу паракан кӳрше малтанах пĕр стакан сăмакун ярса параççĕ: "Мана ĕçне туса патăр, кайран кӳршĕре çĕр чĕтреннишĕн манăн мĕн ĕç пур».

"Пĕр ялта пурăнакансемех çак ялти тепĕр çыннах лешĕн арăмĕ сисмен чух юлашки укçине илсе эрех парса яраççĕ: хам упăшка мар-иç? Хăш-пĕр аптекăсенче шур халатлă сывлăх хуралçисем антисептина чарăнми сутаççĕ: "саккун чармасть, туса кăларакансене чарччăр малтан".

Кашниех хăйĕн çинчен малтан шутлать, хăйĕн интересĕсене мала хурать. Мĕн ĕç пур вĕсен хăйсем сутнă усал шĕвекпе çын картĕнчен тухнă арçынсем килте мăшăрĕсене хĕненишĕн? Çав çемьесенчи ачисем чун татăлмалла йĕнĕшĕн? Кам илтĕ çав айăпсăр айăн тӳсекен ачасен сассисене? Çав тараннченех çынлăх пирки мантăмăр-ши? Укçа хуплать-ши вара чун ăшшине, должноçри тивĕçе чыслăн пурнăçлассине?

Усĕр водителе пула миçе инкекре миçе çыннăн пурнăçĕ татăлчĕ-ши? Кăçал руль умне лариччен тĕрĕсленĕ 280 çынран 147-шĕ эрех ĕçнине тупса палăртнă. Шăп çурри ытла. Шухăшлама та хăрушă. Çула тухма пушшех те.

Ав, каллех "Васкавлă пулăшу" машини кăшкăртса васкать. Кăçалхи 10 уйăхра эрехпе аптранă 170 (пĕлтĕр 260) çын патне çитнĕ вăл. 67-шне больница койки çине хурсах сипленĕ. Унтанпа ноябрь хыçа юлчĕ. Декабре кĕтĕмĕр. Тата çулталăк вĕçленичченех миçе çын пулăшу ыйтĕ тухтăрсенчен çак "мантăр" чирне пула хĕреслĕ яла выртакан çул çинчен пăрма. Çак хушăра тата миçе çынна миçе литр сăмакун, техника спирчĕ сутĕç ялсенчи çак "бизнеспа" укçа "çапакансем?" Тата миçе аптекăра миçе ещĕк антисептин сутĕç? Çак усал шĕвеке пула тата миçе çыннăн хушамачĕ çырăнĕ масарсем çинчи хĕрессем çине?

Хăçан хаклама пуçлатпăр-ши пурнăçа? Нивушлĕ укçа, мул çынсен пурнăçĕнчен те хаклăрах? Мĕн хуравланă пулăттăр çак ыйту çине эсир, магазинсенче çул çитмен çамрăксене эрех-сăра тыттарса яракан сутуçăсем? Антисептин сутакан аптека ертӳçисем? Кӳршĕ-аршă харкашу, инкек шĕвекне сутакан хĕрарăмсем, арçынсем? **Л. ПАВЛОВА.**

2007 çул – Ача çулталăкĕ

Сывă ача – çутă пуласлăх

ЧР Президенчĕ Н.В. Федоров кашни çулталăка пĕр-пĕр пулăмпа çыхăнтарать. Иртнисене аса илер-ха, усси куçкĕретех вĕт. Акă,çĕнĕ çултан Ача çулталăкĕ пуçланĕ. Çак йышăну çамрăк çемьесем çине ырă витĕм кӳретех. Тен, демографи "пăрĕ" те майĕпен хускалĕ, ача-пăча учрежденийĕсем çине ытларах тимлĕх уйăрĕç.

Ачасем пурри вăл – çутă малашлăх, çĕршыв, республика, кил-йыш пуласлăкĕ. Ача сассиллĕ тĕнче хитре, илемлĕ. Пирĕн районта çирĕп сывлăхлă, ăслă-тăнлă ачасем çураласси мĕнле шайра-ха, йывăр çемьесемпе еплерех лару-тăру. Çакă тата ытти ыйту тавра калаçма чĕнтĕм эпĕ районти тĕп больницăн педиатрне М.П. САВЕЛЬЕВАНА.

– Маргарита Петровна, калаçăва чи малтанах ача-пăча çуралас шайран пуçлар пулĕ, унăн кăтартăвĕ савăнтарать е хурлантарать?

– Ача – пурнăç чечекĕ, теççĕ халăхра. Чăн та, пепке – малашлăх, пурнăç чечекĕ, ӳссе çитĕнсен вăл пурнăç кустăрмине малалла çавăракан пулĕ тесе шанать ашшĕ-амăшĕ.

Кăçалхи вунă уйăх хушшинче 303 ача кун çути курчĕ, çакă иртнĕ çулхинчен 10 ача ытларах.

– Эпĕ пĕлнĕ тăрăх, ачасем вилнĕ тĕслĕхсем те пулчĕç районта?

– Шел пулин те, çаплах. Пĕр çула çитменнисем виççĕн вилчĕç, иртнĕ çул вара пĕр ача пулнăччĕ.

– Эсир хăш çула çитнĕ ачасемпе ĕçлетĕр, мĕнле профилактика ĕçĕсем туса ирттеретĕр?

– Эпир анчах çуралнисенчен пуçласа вун çичĕ çула çитнĕ ачасене тĕрлĕ консультаци паратпăр, профилактика ĕçĕсем туса ирттеретпĕр. Хамăр кулленхи ĕçре хĕрарăмсен тата ача-пăча консультацийĕпе, ача çуратмалли уйăмпа, участок больницисемпе, врач амбулаторийĕсемпе тата фельдшерпа акушер пункчĕсемпе тачă çыхăну тытатпăр.

Тин çеç кун çути курнă ачана ача çуратмалли уйăмран участокри медицина ĕçченĕ илсе тухать. Амăшне ачана пăхасси тата çитересси çинчен тĕплĕн каласа ăнлантарать. Сывă ача пӳлĕмĕнче тĕрĕс тĕкел те сывă ача çитĕнтерекенсемпе ятарлă сехетсем иртеççĕ. Çавăн пекех çемьене тĕрĕс планлас пӳлĕмри акушерка пулас амăшĕсемпе тĕл пулу ирттерет. Çапла вара кăçал çие юлнă 215 хĕрарăм тата 178 ача амăшĕ сывă ача пӳлĕмĕнче ятарлă ăнлантару сехечĕсенче пулнă. Пĕр çула çитмен ачасем чирлине палăртсан, пĕр тăхтаса тăмасăр ача-пăча уйăмне выртттаратпăр. Ытларах сывлав органĕсен чирĕсемпе илсе килме тивет. Çавăн пекех тĕп нерв системи хавшани тата вар-хырăм чирĕсемпе аптăрани палăрать.

Çие юлнă тата çитерекен амăшĕсем валли витаминсемпе минералсем туянма, çавăн пекех ачасемпе хĕрарăмсене тĕрĕслев ĕçĕсем пурнăçлама 9 уйăх хушшинче 193913, 5 тенкĕ тăкакланă. Çакă вăл "Чăваш Ен ачисем" программăпа пурнăçланчĕ.

– Йывăр çемьери ачасем пирки эсир мĕн шутлатăр, ун йышшисем учетра чылайййăни?

– Кашни ял тăрăхĕн пуçлăхĕпе пĕрле врач участокĕнче çакăн пек çемьесен ятарлă списокне тунă. Шел, вĕсен хисепĕ пĕчĕк мар, пурне те пĕрле сине тăрса ĕçлеме хистет. Эрех-сăрапа ашкăнса пурăнакан çемьесем 21,3 процент шутланаççĕ. 127 йывăр çемье учетра тăрать. Вĕсенче 17 çула çитеймен 247 ача, çав шутра пĕр çула çитеймен 9 ача.

Ача-пăча уйрăмĕнче йывăр çемьери ачасем валли ятарлă реабилитаци пӳлĕмĕ пур. Иртнĕ çул унта 26 ача сывалнă, çав шутра 10-шĕ 3 çула çитичченхисем пулнă. Кăçалхи çулăн 10 уйăхĕнче вара 33 ача сывалнă, çав шутра 11-шĕ 3 çула çитменнисем.

– Шкулсене ятарлă лекцисем ирттерме тухса çӳретĕр-и?

– Çапла, шкулсене тăтăшах тухса çӳретпĕр, пирус, эрех-сăра сиенĕ пирки ăнлантару сехечĕсем ирттеретпĕр. Çемье планлас пӳлĕмри Ирина Юрьевна акушерка лекцисемпе пĕрлех видеофильмсемпе те паллаштарать. Çак ăнлантарусем харама ан кайччăр, усăллă пулччăр тетпĕр. **Р. ИЛЛАРИОНОВА калаçнă.**

Спорт хыпарĕсем

Пирĕн Татьяна – тăваттăмĕш

Чăваш Республикин биатлонистки, спорт мастерĕ – Муркаш районĕнче çуралса ӳснĕ Татьяна Моисеева çĕршывăн пĕрлештернĕ команди шутĕнче биатлон енĕпе тĕнче кубокĕсене çĕнсе илессишĕн пыракан ăмăртусене хутшăнать. 2006 çулхи ноябрĕн 29-мĕшĕнче Швецири Эстерсунд хулинче хĕрарăмсем хушшинче спринтер ăмăртăвĕ иртнĕ. Пирĕн ентеш Татьяна Моисеева пăхăр медаль çĕнсе илекенрен çеккунтăн вуннăмĕш пайĕ чухлĕ кăна хыçа юлнă. Уншăн ку та тĕнче кубокĕн ăмăртăвĕсенче чи лайăх кăтарту.

Декабрĕн 3-мĕшĕнче вара хĕрарăмсем хушшинче пĕр-пĕрне хăваласа çитессипе ăмăрту иртнĕ. Татьяна пĕрремĕш çаврăмрах пăшалтан пенĕ чух тĕл лектереймен, награда çĕнсе илес шанăçа çухатнă. Апла пулин те Раççей спортсменкисем хушшинче унăн кăтартăвĕсем чи лайăххисем. Финишра вăл темиçе спортсменкăран иртсе кайма пултарнă пулин те, тăватă хут пăшалтан пенĕ чухне кашнинчех йăнăшнă 13-мĕш вырăнтан çӳлерех хăпарма май паман.

С. Колбасовăн парнисене çĕнсе илессишĕн

Декабрĕн 2-мĕшĕнче Оринин шкулĕнче спорт мастерĕн С. Колбасовăн парнисене çĕнсе илессишĕн волейболистсен ăмăртăвĕсем иртнĕ. Унта 7 команда хутшăннă. Хĕрӳ кĕрешӳре 1-мĕш вырăна «Ударник» хуçалăх команди тухнă. 2-мĕшпе 3-мĕшсем – «Моргаушрайбыт» предприятипе «Оринино» хуçалăх командисем. Çĕнтерӳçĕсем Хисеп грамотисемпе хаклă парнесене тивĕçнĕ.

Милици хроникинчен

Ах, камăнне мĕн вăрлам-ши?

Темшĕн-çке, намăс – тĕтĕм мар, куçа кĕмест, текенсем хунасах пыраççĕ. Кукăр алăсем вара мĕн те пулин çаклатмаллине шыраççĕ.

Ноябрĕн 26-мĕшĕнче каçхине Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи Вăрманкасси ялĕнчи 1990 çулта çуралнă йĕкĕт ытла та правур пулнă, Чуманкассине çити килме ӳркенмен. Тен, ăна янтă япала питĕ илĕртнĕ. "Кукăр алли кĕçĕтнĕрен" ВАЗ-2105 автомашинăна кĕме именмен. Çапла майпа 1978 çулта çуралнă çыннăнне Чуманкасси ялĕнчи Советская урамри çурт умĕнчен LC автомагнитола, икĕ автомобиль колонки, салонти тата айккинчи тĕкĕре çаклатса кайнă. Сăтăр тунă хак 2550 тенкĕпе танлашнă. Çакăн пирки РФ УК 158 статйипе уголовнăй ĕç пуçарас ыйту тăрать.

Кутамкка пысăк, татах кĕрет

Çӳлерех асăннă 1990 çулта çуралнă йĕкĕт пысăк кутамккапах килнĕ иккен. Çак çамрăк пĕр машинăна кĕнипех çырлахман, иккĕмĕшне те куç хывнă. Çапла вара 02 сехетре ноябрĕн 26-мĕшĕнче Чуманкасси ялĕнчех инçех мар тепĕр çурт умĕнче ГАЗ-53 автомашина ларнине асăрханă çивĕч куçласкер. Кунта ăна "Гродно" автомагнитола «куç хĕснĕ». Çĕнĕ çула ытла та хаваслă кĕтсе илме шутланăши, "маттурскер" "тав тума" та манман. Тĕкĕрпе поворотник переключательне ватса-çĕмĕрсе хăварнă. Ашшĕ-амăшĕ пĕлет-ши вĕсен ывăлĕ ăçта, мĕн туса çӳренине?

Сана сивĕ пуль, ăшăтам хамах

Ноябрĕн 21-26-мĕшĕсенче Калайкассинчи Молодежная урамри никам та пурăнман çурта паллă мар çын кĕрсе тĕрĕслев ирттерме шухăш тытнă. Ахăртнех, чĕри çапла хушнă. Ĕмĕтне пурнăçлама чӳрече рамине илсе кĕнĕ. Алăк çăрине çĕмĕрнинчен меллĕрех тенĕ-ши? Çапла майпа "Панасоник"музыка центрĕн икĕ динамикне сивĕ пӳртре шăнтса выртттарас темен. Хĕрхеннĕрен ăна ăшă хĕвне чиксе тухса 500 тенкĕлĕх сăтăр тунă. Халĕ вара ун пирки РФ УК 158 статйипе уголовнăй ĕç пуçарнă.

"Чĕкеçĕм" эсĕ манăн...

Ноябрĕн 26-мĕшĕнче Муркаш салин Октябре 50 çул урамĕнче 16 сехетре пĕр çемьере шăв-шав çĕкленнĕ. "Çепĕç" упăшка, хăюлланса кайнăскер, 1963 çулта çуралнă арăмне хăйĕн хĕрӳлĕхне кăтартма шутланă. Çапла майпа арăмĕн пуçĕ сусăрăннипе Муркашри тĕп больницăн хирурги уйрăмне çитме тивнĕ.

Мĕншĕн-ши пуçланать харкашу?

Темшĕн-çке çемьере тăтăшах, тĕрлĕ сăлтава пула, харкашу тухать, арăмсен вара больницăна çитме тивет. Ку хутĕнче Оторккă ялĕнчи Афанасьев урамĕнчи 1971-мĕш çулта çуралнă арçын намăса çухатса хăй чышки йывăрăшне виçме шутланă. Çак ĕç ноябрĕн 27-мĕшĕнче 16 сехетсенче пулса иртнĕ. Ялта ытларах чухне çынсен "йĕплĕ сăмахĕ" çемьесем хушшинчи хирĕçӳ çăл куçĕ пулса тăрать. Ытла та "ăслă" арçынсем каçăхса кайсах итлеççĕ вĕсене. Çапла вара 1974 çулхи хĕрарăмăн Муркашри тĕп больницăна тĕрлĕ сурансемпе килме тивнĕ. Çакăн пирки РФ УК 116 статйипе уголовнăй ĕç пуçарас ыйту тăрать.

Çул-йĕр правилисене пăхăнасчĕ

Ноябрĕн 28-мĕшĕнче 19 сехетре Ситуккасси ялĕ çывăхĕнче Мускав-Уфа автоçул çинче инкек пулса иртнĕ. Мицубисси-Кантер автомашина Уйкас Хачăк ялĕнче 1929 çулта çуралнă хĕрарăма çапса хăварнă. Çуран пыракан çул-йĕр правилисене пăхăнман, çывăхри машина умне тухнă, пурнăçран уйрăлнă.

Ах, чун çунтармăш çут шĕвек

Акă, кур, еплерех эп таса, çап-çутă. Самантрах пуçна санăнне "çавăрăп", – тесе хăй патнех кăчăк туртать çут шĕвек. Эрех шыраса çӳрекенсем лавккаран çăкăр илме укçа шеллеççĕ, "симĕс çĕлене" илме шеллемеççех.

Москакасси ялĕнчи 1955 çулта çуралнă арçыннăн ăшĕ хыпнăран хăй тантăшĕ патне пулăшу ыйтма пынă. Лешĕ, паллах, ăнланнă. Çур литр спирт хутăшлĕ шĕвеке 40 тенкĕпе сутнă. Халĕ вара çак пулăшакан пирки ЧР административлă саккунĕн 16 статйи тăрăх протокол çырма тивнĕ. Ав, еплерех пулса тухать иккен.

Çутă кăсăруклисем тĕлĕрмеççĕ, пур çĕре те çитеççĕ. Айăплисене çийĕнчех тупма тăрăшаççĕ.

Пичете районти шалти ĕçсен пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.

Пĕлтерӳсем. Объявления

**Продаю трактор ЮМЗ-6 в хорошем состоянии, есть прицеп и плуг. Адрес: с. Б. Сундырь.
Тел.: 8(241)52-5-52, 8-908-841-32-07.**

**Куплю пух-перо (гусиное, утиное) новое и старое.
Тел.: 36-2-37, 8-903-379-01-23. 1-2.**

**Купим квартиру в селе Моргауши.
Телефоны: 8-903-065-50-38, 8-906-131-69-49.**

**Сĕт-çу заводне хирĕç вырнаçнă йышăну пунктĕнче ĕне-выльăх тата сурăх-така тирĕсене хаклă хакпа йышăнаççĕ. Сурăх-така туянатпăр.
Тел.: 8-903-063-07-57. 1-2.**

**Икĕ ĕне сутатăп. Пĕри хура-шурă ăратлă, 2-мĕш хут пăруламаллискер. Тепри хĕрлĕ тĕслĕ, 3-мĕш хут пăруламалли. Иккĕшĕ те март уйăхĕнче пăрулаççĕ.
Тел.: 2-16-04, 8-927-855-46-67.**

ВНИМАНИЮ РУКОВОДИТЕЛЕЙ ПРЕДПРИЯТИЙ, ОРГАНИЗАЦИЙ, ПРЕДПРИНИМАТЕЛЕЙ – ПОТРЕБИТЕЛЕЙ ЭЛЕКТРИЧЕСКОЙ ЭНЕРГИИ.

Акты приема-передачи электроэнергии в двух экземплярах необходимо предоставлять в Моргаушский участок филиала «Чебоксарский» ООО «Энергобаланс» по адресу: с. Большой Сундырь, ул. Советская, 37.

В акте указываются показания всех точек учета, включая неработающие. При не предоставлении показаний в срок, расчет потребленной электроэнергии будет выполнен согласно условиям Договора электроснабжения.

Моргаушский участок филиала «Чебоксарский» ООО «Энергобаланс»

- реализует 1-фазные, 3-фазные счетчики электрической энергии;

- выполняет работы по замене электросчетчиков и измерительных трансформаторов тока.

**Наш адрес: с. Большой Сундырь, ул. Советская, 37.
Телефон: 52-1-07.**

Сбор воинов-афганцев 16 декабря в 14-00 в Калайкасинской СОШ по организационным вопросам.

Мăн Сĕнтĕр райповĕн канашĕ, правленийĕ тата коллективĕ В.И. Богданова сутуçăн ывăлĕ

ЕВГЕНИЙ

сарăмсăр вилсе кайнă пирки çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланса пĕлтереççĕ.

ГУП ЧР "Моргаушский издательский дом"
Моргаушская районная газета
"ÇĔНТЕРЎ ЯЛАВĔ"

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики "Моргаушский издательский дом".

**Директор-главный редактор
А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: **morpress@cbx.ru**

Газета зарегистрирована управлением федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу. Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Печать офсетная, об]ем 1,5 п. листа. Тираж 3364.
Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».
Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 08.12.2006 г.
Заказ
Дежурный по номеру ИЛЛАРИОНОВА Р.
ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.

Номер набран и сверстан в ГУП "Моргаушский издательский дом", отпечатан (вкладыши - в ГУП "Моргаушский издательский дом") в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.